26-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1943
СЕНТЯБРЬ
1
ЮНКУН
174(6411) №

# Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ
ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН,
ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН
ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН
ХАÇАЧĔ

## Вăрçă вăхăтĕнчи виççĕмĕш вĕренÿ çулĕ

Паян вăхăтĕнчи виççĕмĕш вĕренÿ çулĕ пуçланать. Пуçламĕш шкулсене, тулăммар вăтам тата вăтам шкулсен I—IV-мĕш классенче вĕренÿ çĕр вĕреме тытăнать; Республикăри 8 çула çитнĕ 27.000 ача ытла паян пирвайхи хут шкула пырса, партăсем хушшине вырнаçса ларать.

Пирĕн çĕршыв выхаилă хирĕç кĕрешнĕ вăхăтра та партипе правительство совет ачисене пĕлÿ парассипе ачасене вĕрентессипе тимлĕн тăрăшать. Ачасен фронтри аннăшĕсем пичченĕсем, тăвансем çĕршывăн ирĕклĕхĕшĕн кĕрешсе Сталинла Конституци пан правасене—вăл шутра вĕренÿ правине те — паттăррăн хÿтĕлеççĕ.

Нимĕç чунилли, вăрçă пуçласа, совет халăхне хирĕç кĕрлесе, культурăна пусарма шутланă. Анчах гитлерла пусмăрçăсен çăткăн ĕмĕчĕсем тĕпĕнпех путланса ларчĕç.

Çĕнĕ вĕренÿ çулĕ вăрçăн пывăр условийĕсенче пуçланать. Çакă вăл шкул работникĕсене çамрăк ăрăва вĕрентсе тĕплĕ хура хурса, фронта çĕршыв умĕнчи ответлăха туйса ĕçлеме хушать. Кăçал пирĕн шкул çулне çитнĕ ачасене пĕрне те вĕренÿ тулашĕнче хăварма юрамасть, ачасене шкула çÿреме пачах пулма тивĕçре.

Вăрçă йывăрлăхĕсене çĕнтерсе, республикăри шкулсем иртнĕ вĕренÿ çулĕнче лайăх ĕçлерĕç. Пирĕн çĕршыв шкулсем кăçал та вĕренÿ çулне хатĕрленчĕç. Вăрнар, Комсомольски районĕсен шкулсем хатĕрленÿ ĕçĕсене уйрăмах лайăх туса ирттерчĕç. Унти руководительсем шкулсене çĕнĕ вĕренÿ çулне тимлĕн хатĕрлес тĕлĕшпе çине тăрса ĕçлерĕç. Çак районсенчи шкулсем вутă хатĕрлесе турттарас, шкул çурчĕсене юсас ĕçсене ирттерчĕç.

Чылай районсенчи колхозсем шкулсене çĕнĕ вĕренÿ çулне хатĕрлеме пулăшрĕç. Елчĕк районĕнчи колхозсем шкул çурчĕсене юсама 15.000 тенкĕ укçа, 241 пăт тырă уйăрса пачĕ, колхозниксемпе колхозницăсем шкул çурчĕсене оборудованийĕсене юсама ĕçре активлăн хутшăнчĕç.

Иртнĕ вĕренÿ çулĕнче республикăри шкулсем шкул çулне çитнĕ ачасен пĕр пайне вĕренме илеймен. Çакă вăл—пирĕн шкулсен ситменлĕхĕ. Ăна кăçал пĕтермелле.

Вăрмар, Ишлей тата ытти хăшпĕр районсенчи шкулсем ачасене пурне те вĕрентме çÿретес тĕлĕшпе ырлама тивĕç ĕçсем туса ирттерчĕç. Вăрмар районĕнчи Тикашри тулăммар вăтам шкул (директорĕ юлташ) ачасем валли апат пĕçерме кухня, столовăй хатĕрлесе хучĕ, халĕ продуктсем хатĕрлет, фронтовиксен ачисемпе тăлăх ачасене тумтир, урана тăхăнмалли парать. Ишлей районĕнче кăçал 24 шкулта ачасене шкула çÿретес тĕлĕшпе ĕçлеççĕ.

Çĕнĕ вĕренÿ çулĕнче ачасене пур предметсемпе те тарăн пĕлÿ парасси, ачасен шкулти тата шкул тулашĕнчи дисциплинине çирĕплетесси, воспитани ĕçне лайăхлатасси çине уйрăмах тимлĕн çаврăнса пăхмалла.

Районсенчи пайĕсемпе педагогика кабинечĕсен çамрăк учительсене тăтăшах пулăшса тăмалла. Опытлă учительсен çамрăк учительсене хăйсем пек ĕçлеме вĕрентмелле.

V—X-мĕш классенче çĕнĕ вĕренÿ çулĕ тепĕр уйăхран—октябрĕн 1-мĕшĕнче пуçланать. Вĕренÿ çулĕ вĕçленнĕренпе республикăри колхозсен уйхирĕсенче шкул ачисем пĕр миллион та икçĕр вунпĕр пин ĕçкунĕ ытла тунă, учительсем 104.155 ĕçкунĕ тунă. Пĕр иккĕленÿ те çук. Аслă классенче вĕренекенсем çак юлнă пĕр уйăх хушшинче колхозсене тырпулсене пухса кĕртес ĕçре калама çук пысăк пулăшу парĕç.

Шкул директорĕсемпе заведующийĕсен, учительсен, комсомолпа пионер организацисен вĕренÿ ĕçне лайăхлатассишĕн, дисциплинăна çирĕплетессишĕн вĕренÿ çулĕн малтанхи кунĕнчен пуçласах хĕрÿллĕн ĕçлеме тытăнмалла.

## Совет Информаци Бюровĕнчен

### АВГУСТĂН 30-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

**Кăнтăр фронтĕнчи çарсем, хаяр çапăçусенче нимĕçсен Таганрог патĕнчи группировкине аркатса тăкса, августăн 30-мĕшĕнче Таганрог хулине йышăнса илнĕ. Пирĕн çарсем халăх пурăнакан 130 пункта ытла йышăнса илнĕ. Вăл шутра район центрĕсем АНАСТАСИЕВКА, ФЕДОРОВКА, хирĕç тăмалли пысăк узелсем — ПОКРОВСКОЕ, ТРОИЦКОЕ, САМБЕК, ВАРЕНОВКА, НИКОЛАЕВКА, НОСОВО, ЛОМАКИНО, ВЕСЕЛО-ВОЗНЕСЕНКА, çавăн пекех тата КУТЕЙНИКОВО чугун çул станцийĕ пур. Çапла ĕнтĕ Ростов облаçне нимĕç захватчикĕсенчен пĕтĕмĕшпех тасатнă. Тăшманăн Таганрог патĕнче çĕмĕрсе тăкнă группировкин юлашкийĕсене пирĕн çарсем çавăрса илнĕ те халĕ пĕтерсе пыраççĕ.**

**Пирĕн БРЯНСКРАН кăнтăртарахра малалла тапăнса пыракан çарсем 10 километртан пуçласа 20 километр таран малалла куçнă, халăх пурăнакан 50 пункта ытла йышăнса илнĕ.**

**ХАРЬКОВРАН хĕвеланăçнерехри тата кăнтăр-хĕвеланăçнерехри районра пирĕн çарсем çаплах малалла тапăнса пынă, халăх пурăнакан темиçе пункта йышăнса илнĕ.**

**Августăн 29-мĕшĕнче пирĕн çарсем мĕнпур фронтсенче нимĕçсен 150 танкне персе çĕмĕрнĕ е пĕтерсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллери тăшманăн 59 самолетне персе ÿкернĕ.**

* * *

Кăнтăр фронтĕнчи çарсем, хаяр çапăçусенче нимĕçсен Таганрог патĕнчи группировкине аркатса тăкса, паян Таганрог хулине йышăнса илнĕ. Темиçе кун каярах пирĕн çарсем, Донецко-Амвросиевка хулине йышăнса илнĕ хыççăн, хăюллă маневр тума пуçланă. Тăшман хаяррăн хирĕç тăнине çĕмĕрсе пырса, советсен кавалерийски тата механизированнăй соединенийĕсем нимĕç çарĕсен тылне кĕрсе кайнă. Питех те хăвăрттăн малалла куçса пырса, пирĕн çарсем халăх пурăнакан 150 пункта ытла йышăнса илнĕ, вăл шутра Анастасиевка тата Федоровка район центрĕсене илнĕ. Халăх пурăнакан Весело-Вознесенка ятлă пункта йышăнса илнĕ хыççăн пирĕн çарсем, Азов тинĕс çыранне тухса, тăшманăн Таганрог патĕнчи группировкине пĕтĕмĕшпех çавăрса илнĕ. Августăн 30-мĕшĕнче кăнтăр фронтĕнчи çарсем, татăклăн штурмласа, Таганрог хулипе портне йышăнса илнĕ. Çак çĕнтерÿпе пирĕн çарсем Ростов облаçне нимĕç захватчикĕсенчен пĕтĕмĕшпех ирĕке кăларчĕç. Таганрог патĕнче çĕмĕрсе тăкнă нимĕç группировкин юлашкийĕсене пирĕн çарсем пĕтерсе пыраççĕ.

* * *

Харьковран хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем çаплах малалла тапăнса пынă, халăх пурăнакан чылай пункта йышăнса илнĕ. Совет çарĕсем малалла куçса пынине чарма хăтланса, тăшман танкĕсен тата пехотин пысăк вăйĕсем темиçе хутчен те хаяр контратакăсем тунă. Гитлеровецсен пур контратакисене те тăшмана пысăк çухатусем кÿрсе сирсе янă. Ку участокра икĕ кун хушшинчи çапăçусенче нимĕçсен 36 танкне персе çĕмĕрнĕ е çунтарса янă, çар грузĕсем турттарса пыракан 160 автомашинăна çĕмĕрсе тăкнă, тăшманăн пехотине пĕр полка çити пĕтерсе тăкнă.

Харьковран кăнтăртарахра пĕр соединени чаçĕсем малалла куçнă, халăх пурăнакан темиçе пункта йышăнса илнĕ. Çав пунктсемшĕн пынă çапăçусенче нимĕç салтакĕсемпе офицерĕсене 1.000 çынна ытла пĕтерсе тăкнă. Пирĕн чаçсем нимĕçсен пĕтĕмĕшпех юсавлă 10 танкне, 20 туппине, нумай пулемет тата ытти трофейăсем те тытса илнĕ. 100 нимĕçе ытла тыткăна илнĕ.

Совет зенитчикĕсемпе пехотинецĕсем нимĕç авиацине йывăр çухатусем кÿреççĕ. Старши лейтенант Ильинăн зенитнăй батарейи кун каçиччен нимĕçсен 9 бомбардировщикне персе ÿкернĕ. Козлов лейтенант командир пулса ертсе пыракан зенитчиксем тăшманăн 6 самолетне пĕтерсе тăкнă. Титов красноармеец танксене пемелли пăшалпа нимĕç самолетне персе ÿкернĕ. Притульский лейтенант, Казинский сержант тата Романичев красноармеец, танксене пемелли пăшалсемпе пĕр харăс персе, тăшманăн пикировка тăвакан бомбардировщикне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Брянскран кăнтăртарахра пирĕн çарсем çаплах малалла тапăнса пынă.

Севск хулинчен хĕвеланăçнерехре нимĕçсем васкасах çĕнĕ резервсем илсе пынă та хаяррăн хирĕç тăраççĕ. Пĕр соединени чаçĕсем тăшманăн 17 контратакине сирсе янă. Çав çапăçусенче тăшман салтакĕсемпе офицерĕсене 2.000 çынна вĕлернĕ, 9 танк, хăй тĕллĕн çÿрекен 8 тупă тата 16 хир туппи пĕтерсе тăкнă. Трофейăсем тытса илнĕ, вăл шутра 15 тупă, 80 пулемет тата боеприпассен 3 склачĕ пур. Тыткăна илнисем пур. Кÿршĕри участокра кĕрешекен танкистсем нимĕçсен 20 танкне (вăл шутран 9 танкĕ „тигр“ йышшисем), тĕрлĕ калибрлă 28 тупă, грузсем турттарса пыракан 140 автомашинăпа лава пĕтерсе тăкнă.

Севск хулинчен кăнтăртарахра пĕр соединени чаçĕсем 10 километртан пуçласа 20 километр таран малалла куçнă, халăх пурăнакан 50 пункта ытла нимĕç захватчикĕсенчен ирĕке кăларнă. Тăшмана çынсем тĕлĕшпе те, техника енĕпе те пысăк çухатусем кÿнĕ. Нимĕçсенчен 68 тупă, 250 пулемет, 11 склад тата ытти трофейăсем те тытса илнĕ.

* * *

Новороссийскран çурçĕр-хĕвеланăçнерехре пирĕн пĕр чаçри артиллеристсемпе минометчиксем, тăшман оборонин сооруженийĕсене персе, нимĕçсен 9 дзотне ишсе антарнă, артиллерин тата минометсен 8 батарейине пĕтерсе тăкнă, гитлеровецсене пĕр ротăна çити вĕлерсе пĕтернĕ.

* * *

Латыш партизанĕсен отрячĕ тăшман çарсем куçарса пыракан шоссе çулĕ çине минăсем лартнă. Çав минăсем çине пырса кĕрсе, нимĕçсен 3 автомашини сирпĕнсе кайнă, 24 гитлеровец пĕтнĕ. Çав отрядри партизансен ушкăнĕх нимĕçсен фронталла каякан çар эшелонне ÿпĕнтерсе янă. Çав крушенире пĕр паровоз, боеприпассем тиенĕ 14 вагон тата салтаксемпе офицерсем ларса пынă 6 класнăй вагон çĕмĕрĕлсе пĕтнĕ.

* * *

Нимĕçсен 26-мĕш пехотнăй дивизийĕнчен Хĕрлĕ Çар енне куçнă лейтенант Иоганн Н. çапла каласа кăтартнă: „Сталинград патĕнчи хăрушă катастрофа ку вăрçăра Германия çиеле тухас шанчăка пачах путарса лартрĕ. Пире нимĕç çарĕ 1943 çулхи çу кунĕсенче вырăссене Сталинградшăн лайăх тавăрĕ-ха, тесе ĕнентеретчĕç. Юлашки уйăхсенче эпир çав шанчăкпа пурăнтăмăр. Анчах та каярах пулса иртнĕ ĕçсем пирĕн плансене пурне те çĕмĕрсе пĕтерсе тăкрĕç. Нимĕç çарĕн июль уйăхĕнчи наступленийĕ пăчланса ларчĕ. Пирĕн дивизи Болхов, Орел тата Карачев патĕнчи йывăр çапăçусенче пулчĕ. Совет çарĕсем хĕссе пынипе эпир пĕр маях каялла чакса пытăмăр, кун серенех йывăр çухатусем тÿсрĕмĕр. Ротăсенче 15—20-шер çын кăна тăрса юлчĕ. Эпĕ гитлерла çамрăксен союзĕн членĕнче нумайччен тăнă. Шкула çÿреме тытăннăранпах эпĕ—нимĕç çарĕ яланах çĕнтерÿсем туса пыракан çар, вăл çар пĕтĕм Европăна çĕнтерсе Германие пăхăнтарса тăрĕ, тесе шанса пурăннă. Юлашки çапăçусем мана нумай вĕрентрĕç. Пирĕн лару-тăру пачах шанчăксăр, эпир тĕпсĕр шăтăкалла пыратпăр. Германия ку вăрçăра аяла пулчĕ ĕнтĕ, халĕ ытла каях юлман чухне алăри хĕçпăшала пăрахас пулать. Çакна пурне те лайăххăн шухăшласа пăхнă хыççăн эпĕ хам рота тăракан вырăнтан пăрахса тухрăм та вырăссене тыткăна парăнтăм».

## Америка самолечĕ Камчаткăна ирĕксĕр анса ларнă

ХАБАРОВСК, августăн 28-мĕшĕ. (ТАСС). Августăн 12-мĕшĕнче Камчатка территорийĕ çине американецсен çар самолечĕ анса ларнă. Самолет экипажĕ каланă тăрăх, вĕсем çав кун Америка авиацийĕн ытти самолечĕсемпе пĕрле японецсен Куриль утравĕсен районĕнчи çар базисене тапăннă, анчах та, моторсем пăсăлса кайнă пирки, ирĕксĕрех Совет территорийĕ çине анса ларма тивнĕ.

Пĕтĕм тĕнчери правăна пăхăнса, Америка самолечĕпе унăн экипажне совет влаçĕсем тытса чарнă, вĕсене çĕршыв тăрăх çÿреме тата унтан тухса кайма ирĕк памасăр усрамалла тунă.

## Хĕрлĕ Çарăн çĕнтерĕвĕсем тылри ĕççыннисене фронтшăн татах та хастаррăнрах ĕçлеме хавхалантараççĕ

### ТЫЛРИ ПАТРИОТСЕН ОТВЕЧĔ

КАНАШ, августăн 31-мĕшĕ. (Хамăр корр.). Хĕрлĕ Çар çĕнтерÿсем тунă ятпа пулса иртекен митингсемпе пухусенче рабочисемпе работницăсем татăклă обязательствăсем илеççĕ. Вагонсем юсакан заводри механически цехри Недоборовский юлташ ертсе пыракан Хĕрлĕ ялавлă бригада август уйăхĕнчи плана 300 процент тултарма, ĕçре браксем тăвассине пĕтерме сăмах пачĕ. Халĕ бригадăри рабочисем илнĕ обязательствăсене ăнăçлăн пурнăçа кĕртсе пыраççĕ. Бригада август уйăхĕнчи производство программине августăн 29-мĕшĕ тĕлне 300 процент ытла пурнăçларĕ. Вагонсем юсакан цехри стахановка Степанова хăйĕн заданине августăн 26-мĕшĕ тĕлнех ирттерсе тултарчĕ. Çак цехри слесарь-автоматчиксем Свидерский, Гордейчук, Байгулов юлташсем кулленех нормăна икшер хут ирттерсе тултараççĕ. Монтажниксен коллективĕ уйăхри плана 200 процент ытла тултарчĕ. Балашов, Круговой, Чуксеев, Верясов юлташсем кулленех нормăсене 350—360-шар процент тултараççĕ.

Голубев юлташ ертсе пыракан слесарьсен бригади август уйăхĕнче планран ирттерсе икĕ вагон юсаса кăларма пулнă. Августăн 29-мĕшĕ тĕлне планран ирттерсе 5 вагон юсаса кăларнă.

Завод август уйăхĕнчи задание срокчен ирттерсе тултарчĕ. Завод коллективĕ Çулçÿрев Халăх Комиссариачĕн куçса çÿрекен Хĕрлĕ ялавне сентябрь уйăхĕнче те хăй аллинчех хăварассишĕн кĕрешет.

**В. ВЕСЕЛОВ**

### Хĕрлĕ Çар примерĕпе çĕнĕ çитĕнÿсем тăватпăр

Главнăй инженер пулса Челноков юлташ ĕçлекен заводри рабочисемпе инженерла-техникла работниксем Орел, Белгород, Харьков хулисене ирĕке кăларнă войскăсене продукци кăларассипе ÿстерсе тав тăваççĕ.

Енер Сталин юлташ Таганрог хулине ирĕке кăларнă войскăсене саламласа кăларнă приказа радио тăрăх вуласа пачĕç.

— Эпир,—теççĕ рабочисемпе работницăсем,—Таганрог хулине ирĕке кăларнă войскăсен примерĕпе çĕнĕ çитĕнÿсем тăватпăр.

Заводра ĕçлекенсем ĕç тухăçлăхне татах ÿстерме обязательствăсем илеççĕ. Стахановка Л. Матвеева, А. Владимирова юлташсем ку таринччен нормăна 150 процент тултарса пынă. Вĕсем малашне икĕ норма тултарма сăмах пачĕç.

### Комбайнсемпе тырă вырмалли плана ирттерсе тултарнă

ЙĔПРЕÇ, августăн 30-мĕшĕ. (Телефонпа). МТС-ри комбайнерсем Сталин юлташ Харьков хулине ирĕке кăларнă войскăсене панă приказ çине уборка ĕçĕсене хăвăртлатнипе ответлеççĕ. Планпа палăртнă тăрăх, кăçал комбайнсемпе 1300 гектар тырă вырмалла пулсан, паянхи куна 1500 гектар вырнă. Комбайнпа тырă вырнă çĕрте Маркиянов юлташ паха тĕслĕхсем кăтартать. Вăл çулталăкри нормăна 213 процент тултарнă. Комбайнерсем Баулин, Иванов, Семенов юлташсем те нормăран ирттерсе тултарнă.

Комбайнсемпе тырă вырмалли плана ăнăçлăн тултарнă май МТС директорĕ Иванов юлташ Чăваш АССР Çĕрĕç Халăх Комиссарĕ Малов юлташран çакăн пек телеграмма илчĕ:

«МТС-ри комбайнерсене, трактористсене тата коллективăн пур членĕсене те комбайнсемпе тырă вырмалли плана ăнăçлăн тултарнăшăн тата çунтармалли япаласене 536 килограмм перекетленĕшĕн саламлатăп. Хăйĕн комбайнĕпе 220 гектар тырă вырнă Маркиянов юлташа, 165 гектар вырнă Баулин юлташа тата хăйĕн машинипе 159 гектар тырă çулнă Иванов юлташа тав тăватăп. Маркиянов, Баулин, Иванов комбайнерсене «Отличнику социалистического сельского хозяйства» значекпа наградăлассипе пирки ССР Çĕрĕç Халăх Комиссарĕ Бенедиктов юлташ патне ыйту тăратăп. МТС коллективĕ авăн çапмалли, кĕрхи çĕртме тумалли плана ăнăçлăн тултарасси çине тата натуроплата вăхăтра пухасси çине шанса тăратăп».

Халĕ МТС-ра производствăллă активлăх тата та ытларах ÿсленчĕ.

**Ф. АРТЕМЬЕВ,**
**ВКП(б) райкомĕн секретарĕ.**

### Çĕнĕ çĕнтерÿпе хавхаланса

КАНАШ, августăн 31-мĕшĕ. (Телефонпа). Районри ĕççыннисем Верховный Главнокомандующи Сталин юлташ Ростов облаçне тата Таганрог хулине ирĕке кăларнă ятпа панă приказа пысăк хаваслăхпа итлерĕç. Çак çĕнĕ çĕнтерÿ вĕсен ĕçлес хастарлăхне татах та ÿстерчĕ. Районри колхозсенче паян çак савăнăçлă хыпара илтнĕ хыççăн, çĕнĕ çĕнтерÿ ячĕпе государствăна тырă пама темиçе вуншар Хĕрлĕ обозсем организацилерĕç.

Паянхи куна районри 25 колхоз уйри тырпулсене вырса пĕтерсе капана хывнă. «Хĕрлĕ хĕм», «Акатуй», «3-мĕш пятилетка», «Хавас», Киров тата Крупская ячĕсемпе тăракан колхозсем, пур тĕрлĕ тырпулсене те вырса пĕтерсе, 1943 çулшăн государствăна çĕр процентĕпех тырă парса татрĕç.

Хăйсен уйри тырпулĕсене пуçтарса пĕтернĕ колхозсем ку ĕçре каярах юлнă колхозсене пулăшма тытăнчĕç. «Хĕрлĕ хĕм» колхоз «Мотор» колхоза 25 гектар ытла çуртырри вырса пачĕ. Киров ячĕпе тăракан колхоз Куйбышев ячĕпе тăракан колхоза 25 гектара яхăн вырса пачĕ. Çавăн пекех районра чылай колхозсем кĕрхи тырăсене акса пĕтерчĕç.

— Хĕрлĕ Çар фронтра паттăррăн кĕрешет. Эпир Хĕрлĕ Çарăн пысăк çитĕнĕвĕ çине ĕçпе ответлĕпĕр,— теççĕ районри ĕççыннисем.

**А. ДОБРОДУШЕВ.**
**ВКП(б) райкомĕн секретарĕ.**

### Колхозниксен патриотла туйăмĕ ÿсет

ЕЛЧĔК. (Телефонпа). Ленин ячĕпе тăракан колхоз членĕсем Хĕрлĕ Çарăн çĕнтерĕвĕсем çине татах та хастаррăнрах ĕçленипе ответлеççĕ. Колхозри 3-мĕшпе 6-мĕш бригадăсенчи колхозниксем, çак иртнĕ иквиçĕ кун хушшинче кунĕн-çĕрĕн ĕçлесе, уйри тырпулсене пĕтĕмĕшпех вырса пĕтерчĕç, ун хыççăн кая юлакан бригадăсене пулăшрĕç. Малта пыракан бригадăсем 90-шар гектар çинчи кĕлтесене капана хывнă.

Ку колхозри колхозниксем государствăна тырă парса татассишĕн те тăрăшса ĕçлеççĕ. Нумаях пулмасть колхозниксем, 38 лавран Хĕрлĕ обоз организацилесе, хатĕрлев пунктне тырă леçрĕç.

«Смычка» колхоз членĕсем, уйхир ĕçĕ хĕрÿллĕн пынă кунсенчех, боецсем валли ăшă япаласем хатĕрлесе пачĕç. Виççĕмĕш бригадăри А. Морозова, З. Соколова, С. Чуванова юлташсем Хĕрлĕ Çар воинĕсем валли пĕрер мăшăр чăлха çыхса панă.

«Вперед» колхозри колхозниксем, паттăр Хĕрлĕ Çарăн çитĕнĕвĕсемпе хавхаланса, ялхуçалăх налогне срокченех тÿлеççĕ. Ялхуçалăх налогĕшĕн Федоров 1140 тенкĕ, В. Иванов 1220 тенкĕ, Т. Якимов 278 тенкĕ укçа хыврĕç.

**С. МАКАРОВ,**
**ВКП(б) райкомĕн секретарĕ.**

## Шупашкар хулинчи парти активĕн пухăвĕ

Çак кунсенче Шупашкар хулинчи парти активĕн пухăвĕ пулса иртрĕ. Пуху хулана хĕле хатĕрлесси çинчен горисполком председателĕн Аникин юлташăн докладне сÿтсе-яврĕ. Пренире Суровов, Стешов, Стуриков, Гуревич, Наумова, Бугаев, Мойсик тата Каплин юлташсем тухса каларĕç.

Докладчикпа пренире тухса калакан юлташсем çакна палăртрĕç: хулари уйрăм предприятисемпе учрежденисем хĕле хатĕрленес тĕлĕшпе чылай ĕçсем тунă, анчах хулана пĕтĕмĕшпе илсен, ку ĕç çителĕксĕр пулса пырать-ха. Промышленность предприятийĕсене, ведомствăсемпе коммунальнăй хуçалăх çурчĕсене, пурăнмалли çуртсене, шкулсемпе больницăсене, культура учрежденийĕсене юсаса ăшăтасси пачах çителĕксĕр пулса пырать. Вутă хатĕрлесе турттарас ĕçе вăраха ярассĕ, çакă вăл горисполком çаврăнăçусăр ĕçленинчен те чылай килет. Хула совечĕн исполкомĕ вутă турттарнă çĕрте хулари транспортпа кирлĕ пек усă курмалла тăвайман. Çавна пула хăшпĕр заводсем, çăкăр комбиначĕ, мунча, коммунальнăй çуртсемпе ытти учрежденисем хĕллене вутăсăр юлас хăрушлăх умĕнче тăраççĕ. Предприятисемпе учрежденисенчи партипе хуçалăх тата профсоюз руководителĕсем рабочисемпе служащисен вăйĕпе хăйсем валли вутă хатĕрлесси çине çителĕксĕр çаврăнса пăхнă.

Чылай çуртйĕрсене юсасси Стройтрест айăпĕпе чарăнса тăрать. Стройтрест управляющийĕ Стешов юлташăн пĕрехмай «унран килмен» сăлтавсем тупăнаççĕ. Анчах тĕплĕнрех пăхсан, çав сăлтавсем пĕри те пулма тивĕçлĕ мар.

Водосвета хĕле хатĕрлесси уйрăмах вăрахăн пырать. Кунта подсобнăй объектсемпе сооруженисене, дизель хуçалăхне паян кунччченех юсаса йĕркелесе çитермен, водопровода хĕллехи вăхăтра ĕçлеме хатĕрлемен, çакă вăл пĕтĕм хула хуçалăхне ĕçре чăрмав кÿме пултарать. Электростанци хальхи вăхăтра хулари промышленноçăн ĕçне кирлĕ таран ĕçлеме май параймасть. Электростанци ĕçне лайăхлатас тĕлĕшпе пур предприятисем те интересленмелле пек. Анчах, ВКП(б) горком секретарĕн промышленноçпа транспорт енĕпе ĕçлекен заместителĕ Мойсик юлташ хăйĕн выступленийĕнче палăртнă тăрăх, пур предприятисен руководителĕсем те мар-ха электростанци ĕçне лайăхлатассишĕн тăрăшаççĕ.

Парти активĕн пухăвĕ суту-илÿ организацийĕсене—Чебторга, Спецторга, стюловăйсен трестне, рабочисене снабжени парса тăрас тĕлĕшпе ĕçлекен отделсене хĕле хатĕрлес ыйту çинче уйрăмах тимлĕн чарăнса тăчĕ.

Парти активĕн пухăвĕ предприятисемпе учрежденисен руководителĕсене, партипе профсоюз тата комсомол организацийĕсене хĕле хатĕрленес ыйтупа сыхăннă мероприятисене пурне те пĕр пăркаланмасăр пурнăçа кĕртес тĕлĕшпе татăклă ĕçсем тума хушса хăварчĕ.

Промышленность предприятийĕсен директорĕсене, ВКП(б) горкомĕпе горисполком заданийĕсем тăрăх, вутă хатĕрлемелли плана пурнăçа кĕртме тата çулталăк тăршшинче кирлĕ пулакан вутта кĕркунне çулсем пăсăличчен пĕтĕмĕшпех турттарса тухма хушнă.

Сентябрь уйăхĕнче производство çуртйĕрĕсене пурне те юсаса ăшăтмалла. Çавăн пекех хваттерсемпе общежитисене, ФЗО шкулĕсен çурчĕсене, ача-пăча çурчĕсемпе сывлăха сыхлас тĕлĕшпе ĕçлекен учрежденисене те пурне те тĕплĕн юсаса çитермелле.

Партактив пухăвĕ хула совет исполкомне пурăнмалли çуртсене тĕпрен юсамалли плана вăхăтра пурнăçа кĕртме, хулана лайăхлатас тĕлĕшпе палăртнă мероприятисене пурне те пурнăçа кĕртме хушрĕ. Çак ĕçсене тунă чухне çулйĕрсене, тротуарсене, станцисемпе пристаньсем патне пымалли çулсене юсасси çине тата кĕркунне йывăçсем лартса хăварасси çине уйрăмах тимлĕн çаврăнса пăхмалла.

Суту-илÿ организацийĕсен тата предприятисенчи рабочисене снабжени парса тăрас тĕлĕшпе ĕçлекен отделсен руководителĕсене пахча-çимĕçсемпе çĕрулми, кăмпа, çавăн пекех тата вĕсене хĕллехи вăхăтра тытса усрамашкăн хатĕрлесе хумалли плансене пурнăçа кĕртме хушнă. Сентябрĕн 15-мĕшĕнчен кая юлмасăр вĕсен пахча-çимĕçсем усрамалли мĕнпур çуртйĕрсемпе катка-пичкесене юсаттарса хумалла.

Парти активĕн пухăвĕ хулана хĕле хатĕрлес тĕлĕшпе ытти ĕçсем те тума палăртса хăварчĕ, мĕнпур коммунистсемпе комсомолецсене, хулари ĕççыннисене çав мероприятисене пурнăçа кĕртнĕ çĕре пĕтĕм вăя мобилизацилеме чĕнчĕ. Хулари предприятисемпе учрежденисен руководителĕсен, партипе совет тата профсоюз организацийĕсен пурин те çине тăрса ĕçлесе, хулари предприятисене, шкулсемпе больницăсене тата ытти учрежденисене хĕллехи вăхăтра пĕр чăрмавсăр ĕçлемелле тăвас пулать, Йошкар-Ола хулипе пыракан ăмăртура малти вырăна тухассишĕн кĕрешмелле.

Партактив пухăвĕн ĕçне ВКП(б) Обкомĕн секретарĕ Чарыков, Чăваш АССР Совнаркомĕн председателĕ Матвеев, ВКП(б) Центральный Комитечĕ çумĕнчи Парти Контроль Комиссийĕн Чăваш республикинчи Уполномоченнăйĕ Серов юлташсем хутшăнчĕç.

# Республика уйхирĕсенче

## 20 КОЛХОЗ КĔРХИ ТЫРĂСЕМ АКСА ПĔТЕРЧĔ

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ. Юлашки кунсенче районри колхозсем кĕрхи тырăсем акас ĕçе чылай вăйлатрĕç. Районĕпе илсен, колхозсем кашни кун вăтамран 600—700 гектар тырă акаççĕ.

Еçе тĕрĕс организациленĕ колхозсем паянхи кун тĕлне кĕрхи тырăсене акса пĕтерчĕç. Тĕрер ялсоветĕнчи «Пчелкино», Медикасси ялсоветĕнчи «Муравей», «Вторая пятилетка» тата ыттисем те (пĕтĕмпе 20 колхоз) кĕрхине вĕçлерĕç. Маларах акнă тырăсем питĕ паха шăтса симĕсленчĕç.

Анчах та районра ака ĕçне чăсса ыракан колхозсем те пур-ха. «Буйга», Ворошилов ячĕпе тăракан колхозсенче суха тума кая юлса тухаççĕ те ирех кĕреççĕ. Савăнпа та ку колхозсен ака ĕçĕ вăраха кайрĕ. Ворошилов ячĕпе тăракан колхозăн 42 гектар, «Буйга» колхозăн 28 гектар акмалли юлнă. «Четай» колхозра лашасемпе кирлĕ пек усă курмаççĕ. Августăн 27-мĕшĕнче, пĕрремĕш бригадăри сўреçĕ М. Александрова виçĕ лашана кунĕпех ĕççĕр тăрапрĕ, çав кун вăл пĕр гектар та сўрелемен. Çакна колхоз председателĕ Александров юлташ пĕлнĕ пулин те, нимĕнле мера та йышăнман. Çавăнпа та ĕнтĕ колхоз 127 гектар вырăнне пурĕ те 63 гектар çеç ыраш акнă.

Кая юлса пыракан колхозсене райçĕрĕç пайĕ те (заведующийĕ Андреев юлташ) пулăшма шутламасть. Райçĕрĕç пайĕнчи агрономсем колхозсене тухса çўремеççĕ.

С. ШАДИН.

## Пахча-çимĕçсем хатĕрлесси

ШАХАСАН. Районри суту-илў организацисен кăçал çĕрулмипе пахча-çимĕçсем иртнĕ çулхинчен икĕ хут ытларах хатĕрлемелле. Апла пулсан, пахча-çимĕçсем хатĕрлес тĕлĕшпе халех çине тăрса ĕçлеме тытăнас пулать. Çакна курмастпăрха халĕ. Суту-илў организацисем ĕç хăй тĕллĕн пуласса шанса лараççĕ. Колхозсемпе тата колхозниксемпе договор тăвасси питех те япăх тăрать. Тунă договорсем плана çĕрулми пухас енĕпе 60 процент, ытти пахча-çимĕçсем енĕпе 40 процент çеç тултарма май параççĕ. Матышў, Атнаш, Шăхасан, Уйкас Кипек сельповĕсем япăх ĕçлеççĕ. Ку сельпосем колхозсемпе договор тăвас плана 20—30 процент çеç пурнăçланă. Сельпо председателĕсем ĕçре кунĕкунĕпе правленисенче ларса вăхăта ирттереççĕ. Правлени членĕсемпе продавецсене ĕçе хутшăнтармаççĕ.

Райпотребсоюзпа унăн хатĕрлев контори вырăнти хатĕрлев работникĕсене пулăшу памаççĕ. Хатĕрлев конторин директорĕ Григорьев юлташ плансене халĕ те хăшпĕр сельпосене çитермен.

Государствăна пахча-çимĕçсем сутас ĕçе ялсовет исполкомĕсемпе колхоз председателĕсем кирлĕ пек хакламаççĕ. «Соревнование», Киров ячĕпе тăракан колхозсен председателĕсем «эпир договор тума пултараймастпăр», тесе бюрократла ответлеççĕ.

Пахча-çимĕçсене договор тăрăх государствăна сутни — Хĕрлĕ Çара ытларах ялхуçалăх продукци пани пулать. Çавăнпа та ку ĕçе хакламанни пулмалла мар.

С. МАКАРОВ.
Райплан председателĕ.

## Хăвăрт ĕçлеççĕ

СĔНТĔР, августăн 25-мĕшĕ. (Хамăр корр.). Оринино ялсоветĕнчи «Красная Чувашия» колхоз кĕрхи тырăсене 4 кун хушшинче вырса пĕтерчĕ. Колхоз председателĕ Г. Бочкин юлташ тырпулсене пухса кĕртес ĕçе пултаруллăн ертсе пырать. Сĕлĕ вырнă чухне Бочкин юлташ хăй машинист пулса ĕçлерĕ. Кунне 4 гектар вырăнне вăл 6-шар гектар вырчĕ, пĕтĕм сĕлле тенĕ пекех хăй пĕччен вырса пуçтарчĕ. Çурласемпе выракансем 5 гектар вырса пухма çеç ĕлкĕрчĕç. Çапла, пĕтĕм ĕçе лайăх организацилесе пынипе, колхоз çурхи тырăсене те ăнăçлăн вырса пĕтерчĕ. Халĕ колхозниксем тимлесех кĕлте кўреççĕ, аван çапаççĕ.

Сĕнтĕр ялсоветĕнчи Чкалов, Мичурин ячĕсемпе тăракан тата «Ударник» колхозсем те тырă вырса пĕтернĕ. Хĕрсех кĕлте турттараççĕ, уяр çанталăкăн кашни сехечĕпе туллин усă кураççĕ. Чкалов тата Мичурин ячĕсемпе тăракан колхоз 30—40-шер гектар çинчи тырра çапса пухнă, государствăна кĕрхи тырăсем парса татнă.

### Шкул ачисемпе учительсем уйхир ĕçĕсенче

ПЕРВОМАЙСКОЕ. Каншельри пуçламĕш шкулти пионерсемпе шкул ачисен отрячĕ каникул пуçланнăранпах «Большевик» колхозра ĕçлет. Отряда Ласточкина комсомолка ертсе пырать. Е. Ильина, П. Ильина, Кудряшова, О. Васильева, Ф. Павлова тата ытти пионерсем те 0,12—0,15-шер гектар выраççĕ.

Отряд колхозниксем хушшинче культмассăллă ĕçе лайăх йĕркеленĕ. Çамрăк ачасем каннă вăхăтра колхозниксене çĕнĕ хаçатсемпе фронтовиксен çырăвĕсене вуласа параççĕ, вăйăсем выляса кăтартаççĕ, ташласа тĕрлĕ юрăсем юрласа параççĕ.

В. ДАВЫДОВ.

ÇĔРПЎ. (Телефонпа). ВЛКСМ райкомĕ августăн 28-мĕшĕнчен пуçласа сентябрĕн 6-мĕшĕччен эмель курăкĕсем тата пучах пухас тĕлĕшпе ятарласа вунăкунлăх ирттерме йышăнчĕ. Топнерти туллимар вăтам шкулта вĕренекенсемпе пионерсем икĕ отряд организацилерĕç. Унта 150 ача пĕрлешсе тăрать. Отрядсене учительница-комсомолка А. Петрова тата шкулти комсомол организацин секретарĕ О. Орлова юлташсем ертсе пыраççĕ.

МИТРОФАНОВ,
ВЛКСМ райкомĕн секретарĕ.

## УЧИТЕЛЬСЕН КОНФЕРЕНЦИЙĔСЕМ

СĔНТĔР, августăн 31-мĕшĕ. (Хамăр корр.). Кунта çак кунсенче учительсен конференцийĕ пулса иртрĕ. Унта икĕ ыйту сўтсе-яврĕç: 1) иртнĕ вĕренў çулĕн итогĕсемпе çĕнĕ вĕренў çулĕн задачисем çинчен, 2) шкулсенчи вĕрентўпе воспитани ĕçĕ çинчен.

1942—43 вĕренў çулĕнче чылай шкулсем халăха çутта кăларас ĕçре çитĕнўсем тунă. Шупоçри пуçламĕш шкул, Орининăри туллимар вăтам шкул ачасене çирĕп пĕлў парса вĕрентнĕ.

Иртнĕ вĕренў çулĕнче çитменлĕхсем те пулнă. Вăл çитменлĕхсенчен пĕри—вĕренў çулне çитнĕ ачасене пурне те шкула явăçтарайманни пулнă. Хăшпĕр шкулсенче вĕренў пахалăхĕ çителĕксĕр пулнă. Уйрăмах вырăс чĕлхипе начар вĕрентнĕ.

Малта пыракан шкулсем кăçалхи вĕренў çулне лайăх хатĕрленсе кĕтсе илнĕ. Нискассинчи туллимар вăтам, Ярославкăри пуçламĕш шкулсем çĕнĕ вĕренў çулне пур енĕпе те хатĕр. Шкул çурчĕсемпе вĕренў хатĕрĕсене юсанă. Хĕл валли вутă та çителĕклĕ хатĕрленĕ.

Конференци участникĕсем СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ пуçламĕш тата вăтам шкулсенчи учительсемпе ытти работниксене ĕçукçи ўстерсе парасси çинчен йышăннă постановление чĕререн ырларĕç. Халăха çутта кăларас тĕлĕшпе ĕçлекен работниксемшĕн партипе правительство куллен тăрăшни çине тивĕçлипе ответлесе, вĕсем кăçалхи вĕренў çулĕнче татах та лайăхрах ĕçлеме пулчĕç. Сĕнтĕр районĕнчи çутĕç работникĕсем Ишлей районĕнчи çутĕç работникĕсене ăмăртăва чĕнчĕç.

Т. ИВАНОВ.

* *

ИШЛЕЙ, августăн 31-мĕшĕ. (Телефонпа). Кĕçĕн классенче вĕрентекен учительсен конференцийĕ пулса иртрĕ. Унта вăтам шкул директорĕсемпе ялсовет исполкомĕсен председателĕсем те пулчĕç. Конференци 1942—43-мĕш вĕренў çулĕн итогĕсемпе çĕнĕ вĕренў çулĕн задачисем, шкулсенчи воспитани тата секцисен ĕçĕсем çинчен сўтсе-яврĕ.

Районри шкулсем иртнĕ вĕренў çулĕнче начар мар ĕçленĕ. Вĕренекенсен 94,5 проценчĕ вĕренўре ĕлкĕрсе пынă. Анчах ачасене пурне те вĕренĕве явăçтарас тĕлĕшпе çителĕксĕр ĕçленĕ.

Конференци кăçал ку çитменлĕхсене пĕтерме, фронтовиксен ачисемпе тăлăх ачасене пурне те вĕренме çўремелле тума палăртрĕ. Кашни колхозрах всеобуч фончĕсем тăваççĕ, 24 шкулта вĕри апатсем çитерессине организацилеççĕ. Хăймаласси ялсоветĕнче 40 ача вырнаçмалăх ача çурчĕ пулать. Хĕллехи сивĕ е çил-тăманлă кунсенче ачасене шкула лашасемпе леçмелле тăваççĕ.

Шкулсенче вĕренў пахалăхĕпе дисциплинăна ўстерессипирĕн умра тăракан ыйтусенчен чи кирли пулса тăрать. Иртнĕ çул Мамăшри, Кшавăшри туллимар вăтам шкулсем, Чаганарти пуçламĕш шкул пĕлў пахалăхĕшĕн çителĕксĕр кĕрешнĕ.

Доклад хыççăн 14 çын тухса каларĕç. Вĕсем шкулсен ĕçĕнчи чылай çитменлĕхсене палăртрĕç.

Т. ГАГАРИН,
Райçутĕç пайĕн заведующийĕ.

## Сталин юлташăн „Совет Союзĕн Аслă отечественнăй вăрçи çинчен“ ятлă кĕнекине вĕренекенсене пулăшас тĕлĕшпе туса ирттермелли лекцисемпе докладсен ТЕМИСЕМ

1. Совет Союзĕн фашистла Германие хирĕç пыракан вăрçи—тĕрĕслĕхлĕ, ирĕке кăлармалли, пĕтĕм халăх вăрçи пулса тăрать.
2. Германин вăрă-хурахла империализмĕ—Совет Союзĕн чи усал та чи улпавлă тăшманĕ.
3. Гитлерăн «çиçĕмле» вăрçă планĕсем путланса ларни.
4. Камсем вĕсем «национал-социалистсем»?
5. Нимĕçсене Мускав патĕнче аркатса тăкни.
6. Хĕрлĕ Çарăн вăйĕпе хăвачĕн çăлкуçĕсем.
7. Сталин юлташ вăрçăри вăхăтлăх условисемпе вăрçа татса паракан яланхи факторсем çинчен.
8. Отечественнăй вăрçăра совет тылĕ мĕнле вырăн йышăнса тăни тата унăн задачисем.
9. Тылри организаторла ĕç.
10. Совет Союзĕ пĕрлĕхлĕ боевой лагерь.
11. Совет стройĕ—тĕнчери чи çирĕп строй.
12. Совет Союзĕпе Германи хушшинчи фронтра вăрçă пынă май вăйсен шайлашăвĕ улшăнни.
13. Сталинград патĕнчи çав тери вăйлă, вăрçăсен историйĕнчи чи пысăк çапăçу.
14. Гитлерла Германие тата унăн Европăри союзникĕсене хирĕç СССР, Англия, США тунă боевой союз.
15. Фашистсен лагерĕнчи кризис.
16. Европăра иккĕмĕш фронт уçас ыйту.
17. Европăри фашистла «çĕнĕ йĕрке».
18. Нимĕçсен фашистла çарĕ—çаратуçăсемпе çынвĕлеренсен çарĕ.
19. Совет партизанĕсем фашистла захватчиксене хирĕç хăйсен пурнăçне шеллемесĕр кĕрешни.
20. Европăри пусмăрлăхра пурăнакан халăхсем гитлерла тиранийе хирĕç кĕрешни.
21. Нимĕç империалисчĕсемпе вĕсен çарĕсене аркатса тăкатпăрах.
22. Хĕрлĕ Çарăн стратегийĕпе тактики нимĕçсен стратегийĕпе тактикинчен малта тăрать.
23. Орел, Белгород тата Харьков хулисене йышăнса илессишĕн пынă историллĕ çапăçусем—Хĕрлĕ Çар çапăçма лайăх вĕренсе çитнин, унăн хастарлăхĕн, вăл пĕлсе маневрсем тунин тĕслĕхĕсем пулса тăраççĕ.
24. Сталин юлташ—Хĕрлĕ Çарăн аслă полководецĕ.
25. Ленин—Сталин партийĕ—Совет халăхĕн нимĕçсен фашистла захватчикĕсене çĕнтерессишĕн пыракан кĕрешĕвне организацилекен.

Кунсăр пуçне тата Сталин юлташăн уйрăм выступленийĕсемпе приказĕсене вĕренес тĕлĕшпе уйрăм лекцисемпе докладсем лартма юрать.

---

### Мускаври театрсем Мускава каялла таврăнаççĕ

22 уйăх хушши урăх вырăнсенче пулнă театрсем — Моссовет, Революци, Камернăй, Сатира, Оперета, Еврей театрĕсем, ачасен Центральнăй театрĕ тата МТЮЗ çитес вăхăтра столицăна каялла таврăнаççĕ.

Çав театрсем вĕсем Уралти, Сибирьти тата Вăтам Азири хуласемпе поселоксенче тата колхозсенче спектакльсем лартнă. (ТАСС).

# Ют çĕршывсенче

## Хĕрлĕ Çар Таганрога йышăнса илни çинчен Англире мĕн çыраççĕ

ЛОНДОН, августăн 30-мĕшĕ. (ТАСС). Англири радио Хĕрлĕ Çар Таганрога йышăнса илни çинчен пĕлтернĕ. Çавăн çинчен çыракансем —совет войскисен çак çĕнĕ çитĕнĕвĕ вĕсен ăсталăхĕпе хастарлăхне кăтартса парать, тесçĕ, мĕншĕн тесен Таганрог нимĕçсен аллинче икĕ çула яхăнах тăнă, нимĕçсем ăна вăйлă çирĕплетнĕ. Британин радио саракан кампанийĕн вăрçă ĕçĕсем çинчен çыракан сотрудникĕ çапла калать: Таганрога йышăнса илни Германи çарĕсене вăйлăн пырса çапни пулса тăрать, вăл Совет Союзĕпе Германи фрончĕн кăнтăр участокĕнче вырăссен стратегийĕ ăнăçлă пулнине тата тепĕр хут кăтартса парать, тет. Гейтер агентствин вăрçă ĕçĕсем çинчен çыракан сотрудникĕ Таганрога йышăнса илни çинчен çапла калать: Хĕрлĕ Çарăн çак çĕнтерĕвĕ стратеги енчен питĕ паха пулса тăрать, тет.

## Данире вăрçă чухнехи пек йĕрке туса хунă

ЛОНДОН, августăн 30-мĕшĕ. (ТАСС). Данири радио, нимĕçсем контрольлесе тăраканскер, Данире вăрçă чухнехи пек йĕрке туса хуни çинчен пĕлтернĕ. Данири оккупациленĕ çарсен командующийĕн приказĕнче çапла каланă: «Юлашки вăхăтра пулса иртнĕ событисем Дани правительстви Данире йĕрке туса хума пултарайманнине кăтартса пачĕç», тенĕ.

Çав приказ çынсене урамсенче пухăнса тăма тата почтăпа, телеграфпа, телефонпа усă курма чарать. Савăнмалли учреждениесене тĕттĕм пулсан пурне те хупмалла: «Забастовкăсене чарса лартнă, забастовка тума чĕнекенсене персе вĕлереççĕ», тенĕ приказра.

Пĕтĕм çĕршывĕпех нимĕçсемпе тытăçусем пулса иртеççĕ, диверççиллĕ, саботажла ĕçсем пулаççĕ.

Германин виçĕ пысăк транспорчĕ, Копенгаген портне пырса, Германи çарĕсемпе танкĕсене антарнă.

Портра хаяр çапăçусем пулса иртнĕ. Дани морякĕсем нимĕçсене хирĕç тăнă, çав вăхăтра моряксен ытти отрячĕсем Дани флотне шыва путарнă. Матроссем боеприпассен склачĕсене тата портри хăшпĕр снаряженисене те сирпĕнтерсе янă.

Мальме хулине (Швеция) ĕнер Данин 6 çар карапĕ пынă, çав шутра канонеркăсем тата торпеда яракан катерсем пур, вĕсен командисем нимĕçсене парăнма килĕшмен. Данин ытти карапĕсене вĕсен командисем Копенгагенри портра августăн 29-мĕшĕнче путарнă.

Швецире Дани хушшинчи çыхăнăва татнă.

СТОКГОЛЬМ, августăн 30-мĕшĕ. (ТАСС). Швецире тухакан «Свенска дагбладет» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, Данире вăрçă чухнехи пек йĕрке туса хурас умĕн çакăн пек ĕç пулса иртнĕ: Гитлер представителĕ Вернер Бекк Дани правительствине ультиматум панă. Çав ультиматумра Данире чрезвычайнăй положени туса хума, Данири хаçатсемпе журналсене Германи цензури пăхса тухмалла тума, тĕрлĕ пухусемпе забастовкăсене чарса лартма, 5 çынтан ытла пухăнса тăма чарма хушнă.

Дани правительстви, королье килĕшсе, çав ультиматума йышăнман. Çавăн хыççăн вара Копенгагена нимĕçсен 3 пысăк судни пырса порта çарсем, танксем тата автомашинăсем антарнă.

## Хĕçпăшала кивçен е аренда йĕркипе памалли закон тăрăх мĕн чухлĕ япала пани çинчен Рузвельт конгреса панă отчет

ВАШИНГТОН, августăн 25-мĕшĕ. (ТАСС.) Хĕçпăшала кивçен е аренда йĕркипе памалли закон тăрăх 1943 çулхи июлĕн 31-мĕшĕччен ют çĕршывсене мĕн-мĕн тата мĕн чухлĕ пани çинчен Рузвельт США конгресне отчет тăратнă. Çав отчетăн малти пайĕнче тăшмана çĕнтерес ĕçре çав закон мĕнле вырăн йышăнса тăни çинчен каланă.

Çак вăрçăра пĕрлешўллĕ нацисем хăйсем умне мĕнле тĕллев лартни çинчен каласан, Рузвельт хăйĕн отчетĕнче малалла çакна кăтартса панă: хĕçпăшала кивçен е аренда йĕркипе памалли программăна йышăннăранпа, урăхла каласан, 1941 çулхи мартăн 11-мĕшĕнчен пуçласа 1943 çулхи июлĕн 31-мĕшĕччен, Америкăри Пĕрлешўллĕ Штатсем çав закон тăрăх ытти государствăсене тĕрлĕ япаласем 13.973.339 пин долларлăх панă. Çав программăна пурнăçа кĕртме пуçланăранпа США Англие 4.458 миллион долларлăх, Совет Союзне 2.444 миллион долларлăх пулăшу панă.

США-ра продовольстви çитменни «хĕçпăшала кивçен е аренда йĕркипе памалли закон тăрăх тĕрлĕ япаласем панинчен чылай килет» тенине хирĕç Рузвельт çапла каланă: ытти государствăсене тăратнă продовольстви Америкăра туса илекен продовольствин 6 проценчĕ çеç пулать, тенĕ. «1943 çулта эпир çĕршывра туса илекен пĕтĕм продовольствин пĕр 10 процентне яратпăр пуль», тенĕ.

## Болгари патши Борис вилнĕ

СОФИЯ, августăн 28-мĕшĕ. (ТАСС). Болгарири радио пĕлтернĕ тăрăх, Софире кĕске вăхăт хушши чирлесе выртнă хыççăн Борис патша вилни çинчен официальнăй йĕркепе пĕлтернĕ.

* * *

Болгарин Борис патши вилни çинчен пĕлсенех, Болгари столицинче, Софире, Германие хирĕç йышлă çынлă демонстрацисем пулса иртнĕ. Демонстрантсем «нимĕçсене кăларса ярăр!» тесе кăшкăрнă тата Болгарин премьер-министрне Филова вырăнтан кăларма ыйтнă. Халăх ушкăнĕсем, Германи миссийĕн тата Германин генеральнăй консульствин çурчĕсем патне кайса, унта кантăксене ватса пĕтернĕ.

# Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçе малалла вăйлатассишĕн

Пирĕн республика 1942 çулта выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕшпе тунă çитĕнўсемшĕн Оборонăн Государственный Комитечĕн куçса çўрекен Хĕрлĕ ялавне тата иккĕмĕш преми илме тивĕçлĕ пулчĕ. Çакă вăл колхозниксемпе колхозницăсене çĕнĕ çитĕнўсем тăвассишĕн кĕрешме хавхалантарчĕ. Пирĕн республикăри колхозниксем кăçал выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли çулталăкри плана августăн 1-мĕшĕ тĕлне ĕне-выльăхсем енĕпе 108,4 процент, сыснасем енĕпе 121,1 процент тата сурăхсемпе качакасем енĕпе 116,9 процент пурнăçа кĕртрĕç. Республикăри районсенчен 24-шĕ выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана пур енĕпе те тултарнă. Колхозсенче ĕçлекен выльăхсен йышне ўстерес тĕлĕшпе сахал мар ĕçсем тунă. Иртнĕ çулсенчи вăкăрсене кўлсе çўреме вĕрентеççĕ. Кўлмелли вăкăрсем халĕ 9 пине яхăн шутланаççĕ.

Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес енĕпе иртнĕ 7 уйăх хушшинче Шăхасан районĕнчи колхозсем лайăх ĕçленĕ. Унта шутăра выльăхсен хисепĕ 25,7 процент, сыснасен хисепĕ 37,1 процент, сурăхсемпе качаксен хисепĕ 50,8 процент чухлĕ ўснĕ. Вăрмарпа Элĕк районĕсем Шăхасансенчен кая юлмаççĕ. Етĕрне, Сĕнтĕр, Вăрнар, Ишлей, Канаш районĕсенче те выльăх-чĕрлĕх хисепне сахал мар ўстернĕ.

Отечественнăй аслă вăрçă пынă тапхăрта лайăх ĕçлекен фермăсен йышĕ нумай ўсрĕ. Йĕпреç районĕнчи колхозсем иртнĕ çулта выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана тултарман пулнă. Кăçал вара çулталăкри плана августăн 1-мĕшĕ тĕлне шултăра выльăхсем енĕпе 113,5 процент, сыснасем енĕпе 101,6 процент, сурăхсемпе качакасем енĕпе 116,9 процент пурнăçланă.

Элĕк районĕ паха тĕслĕхсем кăтартать. Çав районри колхозсем кăçал выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕшпе пысăк çитĕнўсем туса, Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕн куçса çўрекен Хĕрлĕ ялавне илме тивĕçлĕ пулчĕç. Вĕсем выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана пур тĕлĕшпе те июль уйăхĕнчех ирттерсе тултарнă, государствăна аш-какай парса татнă, государствăна сĕт-çу парасси те ăнăçлăн пулса пырать.

Республикăри чылай районсенче кашни ĕнерен сĕт суса илесси ўсет. Çапла Çĕрпў районĕнче 1942 çулхи малтанхи 7 уйăхра кашни ĕнерен вăтамран 679 литр сĕт суса илнĕ пулсан, кăçал çав тапхăртах 739 литр илнĕ. Сĕт суса илесси кăçал Комсомольски районра 119 литр, Ишлей районĕнче 120 литр чухлĕ ўснĕ.

Колхозсем çамрăк выльăхсене начар мар пăхса ўстереççĕ. Иртнĕ 7 уйăх хушшинче республикăра, вăтамран, кашни 100 ĕне пуçне 88 пăру, 100 сысна ами пуçне 95 сысна çури илнĕ. Красноармейски районра кашни 100 ĕне пуçне 93 пăру илсе, вĕсене пурне те лайăх пăхса çитĕнтереççĕ. Çамрăк выльăхсене пăхса ўстерес енĕпе Çĕрпў районĕнче те ĕçсем лайăх пыраççĕ.

Выльăх-чĕрлĕх йышне ăнăçлăн ўстерсе пырас тесен, вĕсем валли нумай тĕрлĕ апатсем хатĕрлемелле. Ку енĕпе кăçал сахал мар ĕçсем тунă. Августăн 1-мĕшĕ тĕлне утă çулса пуçтарса кĕртнĕ, силос хывмалли плана тултарнă. Сĕнтĕрвăрри, Элĕк, Етĕрне тата ытти районсем выльăх апачĕсем иртнĕ çулхинчен чылай нумайрах хатĕрленĕ. Республикăри колхозсенчен нумайĕшĕсен выльăх апачĕсем акса тумалли участоксем пур. Вĕсенче фермăсенчи работниксен вăйĕпе тымар-çимĕçсем акса хăварнă. Выльăх апачĕсем хатĕрлес ĕçе лайăхлатма ССР Союзĕн Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ утă çулса пуçтарнăшăн тата силос хывас плана ирттерсе тултарнăшăн натурăпа хушса тўлесси çинчен кăтартса пани нумай пулăшрĕ. Шăмăршă районĕнче çав кăтартăва пурнăçа кĕртсе пырса, утă çулас ĕçе хăвăрт тунă. Вăл районра утă çулнă çĕрте лайăх ĕçленĕшĕн 150 колхозника хушса тўленĕ.

Пирĕн республикăра выльăх-чĕрлĕх продуктивноçне малалла ўстерсе пыма лайăх условисем пур. Вăл малта пыракан работниксен ĕçĕсенчен те курăнать. Кăçал кăна выльăх-чĕрлĕх продуктивноçне ўстернĕшĕн 472 колхозника хушса тўленĕ тата 202 колхозника преми панă. Пăрачкав районĕнчи «Передовик» колхозри ферма заведующийĕ Шемаковский юлташ сĕт суса илмелли çурçулхи плана июль уйăхĕнчех тултарнă. Красноармейски районри «Чемыш» колхозри кроликсем пăхакан А. Т. Моренкова юлташ кроликсем пăхса ўстермелли плана ирттерсе тултарнă, 1000 килограмм кролик çăмĕ пухнă. Çавăншăн вăл 8 кролик, 3,3 килограмм çăм илнĕ. Кун пек примерсем нумай кăтартса пама пулать. Мари республикипе ăмăртăва тухса, республикăри колхозниксем кашни ĕнерен 1200 литр сĕт, кашни сурăхран 2,5 килограмм çăм, сысна аминчен 12 çăвăр илме пулчĕç. Пирĕн çак обязательствăсене пурнăçа кĕртес пулать.

Колхозсенче лашасен йышне ўстерес, вĕсене пăхса усрас ĕç лайăхланать. Республика лашасен йышне ўстермелли плана 96,8 процент тултарнă. Уйрăмăн илсен, Элĕк, Калинино, Сĕнтĕр, Елчĕк районĕсем аван ĕçлеççĕ. Малта пыракан районсенчи колхозсем кăçал тихасене иртнĕ çулхинчен нумайрах ўстереççĕ. Çапла Сĕнтĕр районĕнчи колхозсем тихасем ўстеремелли плана 128 процент ытла пурнăçа кĕртнĕ. Вăрнар, Красноармейски районсем те плана пурнăçланă. Колхозсенче паха ĕç тĕслĕхĕсем кăтартакан конюхсен йышĕ ўсет. Красноармейски районри «Победа» колхозри конюх Романов юлташ 1943 çулта 58 кĕсре пуçне 58 тиха ўстерет. Вăл пăхакан пур лашасем те мăнтăр. Анчах та районсенче малта пыракансен опытне сарас тĕлĕшпе çителĕксĕр ĕçлеççĕ-ха. Улатăр, Кувакино, Пăрачкав районĕсенче лашасене пăхса усрас ĕçре çирĕп йĕрке тăвассишĕн тăрăшни çук. Çавăнпа ĕнтĕ вăл районсенче ку енĕпе плана тултармаççĕ.

Выльăх-чĕрлĕхе, уйрăмăнах çамрăк выльăхсене, пăхса усрас ĕçре фермăсен çурчĕсене хĕле хатĕрлесси пысăк вырăн йышăнса тăрать. Нумай çĕрте выльăхсем усрамалли çуртсене юсама тата çĕнĕрен тума уйрăм бригадăсем уйăрнă. Калинино районĕнче кăна ун пек бригадăсем 20 ĕçлеççĕ. Бригадăсем ку таранччен 2 300 лаша, 1121 ĕне, 215 пăру, 1625 сысна, 2227 сурăх усрамалăх витесем юсанă. Анчах хĕле хатĕрленес тĕлĕшпе пур çĕрте те кирлĕ пек ĕçлемеççĕ-ха. Улатăр, Шăхасан, Пăрачкав районĕсенче çуртсене çурри те юсаман.

Пирĕн республикăри колхозсем нимĕç оккупанчĕсенчен ирĕке кăларнă районсенчи колхозсене пулăшас ĕçе те манса хăвармаççĕ. Сталинград облаçĕнчи колхозсене пулăшма шултăра выльăхсем 220 пуç, 2004 сысна, 2843 сурăх тата кайăк-кĕшĕксем 2265 пуç уйăрнă. Фронтри красноармеецсен çемьисене 204 пăру, 17.144 сысна çури, 500 сурăх тата кайăк-кĕшĕксем 34.890 пуç илсе панă.

Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçре çитменлĕхсем те сахал мар-ха. Фермăсене комплектламалли плана тултарман колхозсем пур. Выльăх-чĕрлĕх хисепĕ пĕтĕм республикипе ўснĕ вăхăтрах Пăрачкав, Чкаловски, Çĕмĕрле, Улатăр районĕсенче чакни çинчен калакан фактсем пур. Хăшпĕр колхозсенче çамрăк выльăхсене пусаççĕ. Çапла Канаш районĕнчи «Красное Знамя» колхозра пăру пуснă. Кун пек йĕркесĕрлĕхсене пĕтерес пулать, çамрăк выльăхсене пурне те пăхса ўстермелле.

Выльăхсене хĕл каçарма тĕплĕн хатĕрленмелле. Çуртсене юсамалла, апатсем çителĕклĕ хатĕрлемеле. Силос хывассине ўстерес пулать, иртнĕ çулта юлнă выльăх апачĕсене тирпейлĕ пăхса усрамалла. Йĕкел пухассине организацилемелле. Крахмалпа, патокăпа тата вырăнти промышленность предприятийĕсен ытти отхочĕсемпе усă курмалла.

Партипе совет организацийĕсем, çĕрĕç оргăнĕсен работникĕсем пĕтĕм колхозниксемпе колхозницăсене малта пыракансем пек ĕçлеме мобилизацилесен, эпир Оборонăн Государственный Комитечĕн Хĕрлĕ ялавне кăçал та хамăр республика аллинчех хăварма пултаратпăр.

А. МИТРОФАНОВА.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редакци секретарĕн—4—26, парти пурнăç пайĕн—3—99, промышленноçпа ялхуçалăх пайĕн—5—31, издательство конторин — 0—23.

Типография №1 Управления полиграф. промышленности при СНК ЧАССР, Заказ №2 Ф. б. 53 88 п. л.